# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

70 (7495) № ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи августăн (çурла) 25-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


**Вырма – 2007**

## Ĕç çире малта



**Суворов ячĕллĕ хуçалăхри Николай Витальевич Павлов “Дон-1500” комбайнсен класĕнче 171 тонна тĕш тырă çапса тĕшĕлесе иккĕмĕш вырăна тивĕçрĕ. Сăмах май каласан, малтисен ретĕнче вăл иккĕмĕш хут ĕнтĕ.**

Августăн 23-мĕшĕнче район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕн çумĕ – ял хуçалăх управленийĕн тĕп агрономĕ Александр Ильич Павлов тата агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕн председателĕ Фаина Федосеевна Григорьева вырма, ака ĕçĕсемпе паллашма, вырма паттăрĕсене чыслама Е. Андреев яч.хис., Чкалов яч.хис., Суворов яч. хис. хуçалăхсене çитрĕç.

Вĕсем Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăх уй-хирне çитнĕ самантра унта ака ĕçĕ пыратчĕ. Хуçалăх ĕçченĕсем паха вăхăта хаклани тата çĕнĕ трактор вăйĕпе туллин усă курни палăрчĕ. Сăмах май, хуçалăхри ĕç кăтартăвĕ малтисен шайĕнче курăнать (сводкăран). Кĕрхи культурăсене 85 гектар çинче акма ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ. Çак культура чăннипех те пысăк тухăç панине тĕпе хурса унăн лаптăкне самай анлăлатма палăртаççĕ.

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ АВГУСТĂН 24-МĔШĔ ТĔЛНЕ КĔРХИ УЙ-ХИР ĔÇĔСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ**

**Цифрăсен колонкисенче: 1. Тĕш тырăпа пăрça йышши культурăсене çулнă тата вырнă. 2. Улăм пухса тирпейленĕ (процентпа). 3. Вăтам тухăç (пĕр гектар пуçне, центнерпа). 4. Кĕр аки валли çĕр хатĕрленĕ (гектарпа).**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 59 | 81 | 14,0 | 0 | |
| «Волга» | | 47 | 80,1 | 16,7 | 20 |
| «Восток» | | 100 | 100 | 16,4 | 57 |
| «Герой» | | 100 | 90,8 | 24,2 | 83 |
| К. Иванов яч. хис. | | 93 | 35,5 | 10,9 | 0 |
| Ильич яч. хис. | | 97 | 95 | 31,5 | 220 |
| ООО «ВТМ» | 5 | 0 | 10,0 | 0 | |
| Ленин яч. хис. | | 54 | 65,5 | 16,0 | 135 |
| «Лидер» АФ | 18 | 0 | 12,9 | 250 | |
| «Дружба» АФ | | 100 | 100 | 21,8 | 0 |
| «Оринино» | | 100 | 94,9 | 20,7 | 195 |
| «Передовик» | | 48 | 47,3 | 14,3 | 29 |
| «Свобода» | | 69 | 84,7 | 20,5 | 220 |
| «Сеятель» | | 53 | 90,1 | 15,0 | 200 |
| Суворов яч. хис. | | 92 | 17,7 | 23,2 | 540 |
| «Рассвет» АФ | | 64 | 61,9 | 17,2 | 170 |
| «Ударник» | | 73 | 74,2 | 21,8 | 500 |
| Чапаев яч. хис. | | 89 | 69 | 13,8 | 97 |
| «Чемеево» | | 100 | 70,7 | 11,8 | 108 |
| Чкалов яч. хис. | | 97 | 77,3 | 34,1 | 250 |
| ООО Мичурин яч. хис. АФ | | 0 | 0 | | |
| **Ял хуçалăх предприятийĕсемпе** | | **71,5** | **72,8** | **19,5** | **3084** |

**Учительсен августри конференцийĕ**

## Умри ыйтусене сӳтсе яврĕç

Йăлана кĕнĕ тăрăх кашни çулах çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕн август уйăхĕнче учительсен районти конференцийĕ иртет. Кăçал вăл Нискасси шкулĕнче августăн 23-мĕшĕнче иртрĕ. Ăнсăртран мар. Шкул коллективĕ кăçал 1 миллион тенкĕ Раççей Президенчĕн грантне илме тивĕç пулчĕ.

Малтанах ĕç-пуç уйрăм темăсемпе йĕркеленĕ 5 секцире иртрĕ. Пленарлă пайра район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ Л.И. Мочалов «Экономика тата вĕренӳ» доклад туса пачĕ.




Доклад тăрăх Муркаш лицейĕн директорĕ Н.Е. Смирнов, Нискасси шкулĕн директорĕ А.А. Калинкина, Москакасси шкулĕн директорĕ И.А. Иванов, Калайкасси шкулĕн директорĕн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ А.М. Степанов, Нискасси шкулĕн историпе обществоведени учителĕ В.И. Тихонов, Муркаш шкулĕн директорĕн вĕрентӳпе воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ О.Д. Ефанов, «Солнышко» ача сачĕн воспитателĕ О.В. Прокопьева, Чăваш Республикин Президенчĕн администрацийĕн представителĕ, республика ветеринари службин ертӳçи В.К. Тихонов, Чăваш Республикин вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрĕн пулăшаканĕ Н.В. Гердо тухса каларĕç.

Конференци итогĕсене район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов пĕтĕмлетрĕ.

Парнесемпе Хисеп грамотисене, Тав çырăвĕсене тивĕçекенсем сахал мар пулчĕç. Вĕренӳ ĕçченĕсене Чăваш Республикин Президенчĕн администрацийĕн представителĕ, республика ветеринари службин ертӳçи В.К. Тихонов, Чăваш Республикин вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрĕн пулăшаканĕ Н.В. Гердо, район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ Л.И. Мочалов Хисеп грамотисемпе парнесем пачĕç. Оринин, Çатракасси, Ярапайкасси шкулĕсем вара «Вĕренӳ» приоритетлă наци проекчĕпе килĕшӳллĕн шкул автобусĕсем, Чуманкасси шкулĕ микроавтобус илни пирки В.К. Тихоновран свидетельствăсем илчĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: конференцие хутшăннă Муркаш шкулĕн делегацийĕ Нискассинче.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Юбилей**

### Саламлатпăр

Хисеплĕ те юратнă аннене, ăшă кăмăллă асаннене, хаклăран та хаклă тăванăмăра – Муркашра пурăнакан **Валентина Семеновна САВЕЛЬЕВАНА** çуралнă кунĕ ячĕпе чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

Çирĕп сывлăхпа телей сунатпăр, ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем пурнăçа кĕрсех пыччăр, ывăлусемпе кинӳсенчен, мăнукусенчен ăнланулăх яланах пултăр, çывăх тăванусен юратăвĕ пурăнма вăй-хал парса тăтăр.

**Ăшă салампа: ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**

---

Йӳçкасси ял тăрăхне кĕрекен Вăрманкасси ялĕнче пурăнакан **Нина Викторовна МАТВЕЕВАНА** августăн 28-мĕшĕнче 80 çул тултарнă ятпа чунтан тухакан чи ăшă кăмăлпа саламлатпăр.

Эсĕ пурри – пирĕн савăнăç, пуянлăх. Эсĕ ырă кăмăлупа, ĕçченлĕхпе, тирпейлĕхпе палăрса тăратăн. Сана эпир ырлăх-сывлăх,



телей сунатпăр, ватлăху канлĕ пултăр. Пирĕншĕн яланах эсĕ ырă кăмăллă пулнă, малалла та çаплах пул.

Çулсем иртни сана ан кӳтĕр тунсăх,<br>
Вăй-халусем çеç пулччăр иксĕлми.<br>
Сана сунатпăр ырлăх-сывлăх,<br>
Тата çап-çут телей нихçан сӳнми.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем, çывăх тăванĕсемпе юлташĕсем, пускилсем, хурăнташсем.**



Муркашра пурăнакан **Агафия Прокопьевна БАШКИРОВАНА** çак кунсенче 80 çул тултарнă ятпа чи ăшă кăмăлпа саламлатпăр.

Юбилей ячĕпе саламласа сана мĕн пур ыррине кăна сунатпăр, канлĕ ватлăх сунатпăр, ачусен, мăнуксен ăшши нихăçан та ан иксĕлтĕр.

**Пысăк салампа: 5 ывăлĕ, 5 кинĕ, 14 мăнукĕ, 6 прамăнукĕ, тăванĕсем тата тăхлачи.**

---

Очăкасси ялĕнче пурăнакан **Владимир Геннадьевич МАТВЕЕВА** 55 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тата ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, ăнăçу, вăрăм ĕмĕр сунатпăр.

Эсĕ нумай çул хушши К. Иванов ячĕллĕ колхоз производствине аталантарассишĕн вăй хутăн, халĕ Очăкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта тимлесе ĕçлетĕн. Хăвăн тивĕçӳсене



яланах тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлатăн, ĕçе пĕрремĕш вырăна хуратăн.

Тав сана пуриншĕн те чунтан:<br>
Ăнланатăн та канаш паратăн,<br>
Пулăшатăн пĕтĕм кăмăлтан –<br>
Çынсене эс питĕ юрататăн.<br>
Эс пурри пире вăй-хал хушать,<br>
Тĕрĕс пурăнма хăват парать.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕпе ывăлĕ, кĕрĕвĕпе кинĕ, 3 мăнукĕ, тăванĕсемпе тусĕсем.**

**“Единая Россия” партин кадрсен резервĕн кандидачĕ**

## “Ял çынни хăй ял хуçалăх ĕçченĕ пулнипе мăнаçлантăр”



Хаçатăн иртнĕ номерĕнче Муркашра “Единая Россия” партин пур шайри должноçсен кадрĕсен резервне кĕртнĕ кандидатсемпе иртнĕ тĕл пулу çинчен пĕлтернĕччĕ. Асилтеретĕп, Чăваш Республикинчен тăратнă асăннă партин кадрсен резервĕн списокĕнче пирĕн ентешĕн Раççей Геройĕн Е.Г. Борисовăн хушамачĕ те пур.

–Пирĕн районшăн та лайăх пуçламăш ку, – палăртрĕ ун чухне ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В. Г. Данилов, ентешĕмĕрĕн ĕçлеме пултараслăхне палăртнă май.

Çак тĕл пулăва хутшăнакансем Евгений Германович çинчен тепĕр çĕнĕ хыпар та пĕлчĕç. Раççей Геройĕ “Агроинвест” чикĕллĕ яваплăхлă обществăн директорĕ, “Афганистан ветеранĕсен Раççейри Союзĕ” Пĕтĕм Раççейри обществăлла организацийĕн членĕ, “Единая Россия” политика партийĕн членĕ, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш Патшалăх университетĕн экономика факультечĕн студенчĕ Е.Г. Борисов хамăр районти “Герой” хуçалăх ертӳçин çумĕнче ĕçлеме пуçланă. Паллă ентешĕмĕрĕн биографийĕнчи пĕр харăсах уçăлнă икĕ страница. Çак икĕ утăмĕ те унăн пĕр тĕллевпе тунăскерсем – çакă палăрчĕ унпа каласнă хыççăн.

**(Вĕçĕ 5-мĕш стр.).**

**Райадминистрацире**

## Ĕçри пултарулăхшăн

Район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕпе халăх вĕрентĕвĕн ĕçченĕсен районти канашĕ, Мăн Сĕнтĕр тата Муркаш райпо канашĕсем, Муркаш почтампчĕ, хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ ыйтнисене тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн 337 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăлама йышăннă:

1. Потребительсен кооперацийĕн тытăмĕнче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Лидия Федоровна ГАВРИЛОВАНА**, Мăн Сĕнтĕр райповĕн «Илем» кафе аслă поварне;

– **Вера Семеновна ИВАНОВАНА**, Мăн Сĕнтĕр райповĕн «Илем» кафе поварне;

– **Венера Константиновна КОРОЛЬКОВАНА**, Муркаш райповĕн «Стройхозтовары» магазинĕн сутуçине;

– **Римма Димитриевна ОСИПОВАНА**, Мăн Сĕнтĕр райповĕн Калайкассинчи куллен кирлĕ таварсен магазинĕн сутуçине;

– **Рената Ивановна ЯРДЫКОВАНА**, Муркаш райповĕн «Центральный» магазинĕн сутуçине.

2. Почта çыхăнăвĕн отраслĕне аталантарма пысăк тӳпе хывнăшăн:

– **Земфира Германовна АБРАМОВАНА**, почта çыхăнăвĕн Шетмĕпуçĕнчи уйрăмĕн почтальонне;

– **Вера Васильевна ТЯМИНАНА**, почта çыхăнăвĕн Калайкассинчи уйрăмĕн почтальонне.

3. Вĕренӳ ĕçĕнче нумай çул хушши тăрăшнăшăн – **Меркурий Иванович ИВАНОВА**, педагогика ĕçĕн ветеранне.

4. Строительствăра нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Петр Трофимович МЕДУНГИНА**, «Моргаушская» строительство организацийĕн прорабне.

## Йӳнĕ хакпа çырăнăр

### Сентябрĕн 1-мĕшĕнчен хаçат-журнал çырăнмалли хак 27 процент ӳсет

**Вăхăт малаллах васкать. Акă “Çĕнтерӳ ялавĕ” хаçата 2008 çулхи пĕрремĕш çур çул валли çырăнмалли тапхăр çитрĕ.**

**Вулакансене аса илтеретпĕр, район хаçатне августăн 31-мĕшĕччен унччен хакпа çырăнтаратпăр. Унччен хи хак тени вăл иртнĕ çырăнтару кампанийĕнчи хака пĕлтерет. Ултă уйăхлăха çырăннăшăн 147 тенкĕ те 42 пус тӳлемелле. Августăн 31-мĕшĕччен.**

**Сентябрĕн 1-мĕшĕнчен мĕн пур хаçат-журнала çырăнтармалли хак 27 процент чухлĕ ӳсет. Çав шута, паллах, район хаçачĕ те кĕрет. Çакăн çинчен пĕлтерчĕç пире почта ĕçченĕсем.**

**Апла пулсан, хаклă вулакансем, “Çĕнтерӳ ялавне” çитес çул валли паян-ыранах çырăнса илме тăрăшăр.**

**Çитес çул та пĕрле пулар!**

**Райхаçат редакцийĕ.**